25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
30
ШАМАТКУН
23(6260) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Перекетлĕхри пирвайхи утăмсемпе малашнехи задачăсем

Большевиксен партийĕпе совет государстви пирĕн социализмлă халăх хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке туса хурассине, типтерлĕхпе перекетлĕхшĕн кĕрешессине яланах пысăк вырăна хунă. Хуçалăхра типтерлĕ пуласси, çĕршыва перекет кӳрессси уйрăмах халĕ, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, пысăк задача пулса тухса тăчĕ. Пирĕн халĕ пур çĕрте те, пур ĕçре те тата пурне те перекетлемелле. Уйрăмах топливăна, электроэнергине тата чĕртавара перекетлессишĕн тимлĕн кĕрешмелле.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура лайăх ĕçлекен предприятисем типтерлĕхпе перекетлĕхе вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп закон вырăнне, уншăн кĕрешессине — мĕнпур коллективăн тивĕçĕ вырăнне хурса хаклаççĕ. Хуçалăхри перекетлĕхшĕн пыракан кĕрешĕве Вăрнарти фосфорит заводĕнчи кашни рабочипе служащи, инженерпа техник хутшăннă. Кунта кун каçиччен кашниех мĕн те пулин перекетлет. Кунта чĕртавара, электроэнергие, топливăна кăна мар, ытти вак-тĕвек япаласене те перекетлеме тăрăшаççĕ. Пĕтĕм коллектив çавăн пек тăрăшнине пула завод иртнĕ çулăн юлашки уйăхĕсенче кăна çĕршыва 600 пин тенкĕ перекет кӳнĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ те типтерлĕхпе перекетлĕхшĕн яланхинчен тимлĕнрех кĕрешет, заводри малта пыракан цехсем, кивĕ детальсемпе усă курса, материалсене типтерлĕ тыткаласа, иртнĕ çулăн юлашки 7 уйăхĕнче 5 миллион тенкĕ ытла перекетленĕ. Вагонсем юсакан цехра, сăмахран, купа çинче тутăхса выртакан детальсемпе усă курнипе икĕ уйăх хушшинче кăна 123 пин тенкĕ перекетленĕ.

Анчах кусем заводри перекетлĕхшĕн кĕрешнин малтанхи утăмĕсем кăна-ха. Иртнĕ çулăн вĕçĕнче пулса иртнĕ заводри партипе хуçалăх активĕн канашлăвĕ, типтерлĕхпе перекетлĕх ыйтăвĕсене тĕплĕн сӳтсе-явса, ку тĕлĕшпе туса иртермелли мероприятисене чылай палăртса хăварчĕ. Заводри ертсе пыракан работниксем, рабочисемпе служащисем халĕ çав мероприятисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Производствăна урăхлатса çĕнетсе пыни, рационализаторла сĕнӳсем пани заводра перекет кӳмелли ăнăçлă майсенчен пĕри пулса тăнă. Иртнĕ çулхине заводри рационализаторсем темиçе вуншар сĕнӳ панă. Вĕсенчен утмăл ултташĕпе ĕçре усă курни кăна завода 300 пин тенкĕ перекет кӳнĕ. Кăçалхи çул завод коллективĕ производствăна урăхлатса çĕнетсе пынипе пĕр миллион тенкĕ перекетлеме задача лартнă.

Перекетлĕх тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене пурне те пурнăçа кĕртсе пырасси çак ĕçе предприятири хуçалăх работникĕсем тата партипе профсоюз организацийĕсем мĕнле ертсе пынинчен нумай килет. Калас пулать, Канашри вагонсем юсакан заводри руководительсем, партипе профсоюз организацийĕсем хăйсен активĕн канашлăвĕнче палăртнă мероприятисем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ, çавна пула хăшпĕр мероприятисем çинчен заводри цехсенче мансах кайнă. Перекетлĕх тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене кашнинех ĕçе кĕртсе пырассишĕн, государство планне тултарассишĕн кĕрешнĕ пекех, кĕрешмелле. Мĕншĕн тесен, пурне те перекетлени ытларах продукци туса кăларма, таварăн хăйне ларакан хакне чакарма пулăшать.

Вăрçă вăхăтĕнче электроэнергие типтерлĕн расходласси, ăна май пур таран перекетлесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мĕншĕн тесен энерги мĕнле çитнинчен предприятин мĕнпур ĕç ăнăçлăхĕ килет. Республикăри промышленность работникĕсем, партипе совет организацисем юлашки вăхăтра энергетика ресурсĕсем çине ытларах çавăрăнса пăхма пуçларĕç. Улатăрти паровозсем юсакан Хĕрлĕ ялавлă заводра иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче туса кăларнă кашни пин тенкĕ продукци пуçне 13 киловатт-сехет электроэнерги перекетленĕ. Ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче перекетленĕ энергин хисепĕ унтан пысăкрах.

Электроэнергине перекетлес тĕлĕшпе Çĕмĕрле комбинатĕнче те чылай ĕçсем тунă. Ятарласа уйăрнă комисси электричество вăйĕпе цехсенче мĕнле тата мĕн таран усă курнине тĕрĕслесе тухнă. Çавăн хыççăн, май пур çĕрте, вăйлă моторсене вăйсăртараххисемпе улăштарнă, электричество лампиcен хисепне сахаллатнă. Çакăн пек мероприятисене комбинатра çеç мар, рабочисем пурăнакан поселокра та туса иртттернĕ. Унта электричество çуттипе нормăран иртттерсе усă курнине пĕтернĕ, хваттерсенче электроплитасем тытма чарнă. Çак мероприятисем пурĕ пĕрле пĕр уйăхра кăна 13.875 киловатт-сехет электроэнерги перекетлеме пулăшнă.

Электроэнергие, чĕртавара, топливăна тата ытти япаласене те перекетлес тĕлĕшпе республикăри чылай предприятисем çавăн пек ĕçсем турĕç. Малта пыракан предприятисен ку тĕлĕшпе пысăк опытсемех пур. Промышленность халăх комиссариачĕсен руководителĕсен, хуçалăх работникĕсен, парти, совет тата профсоюз организацийĕсен задачи — çав опытсемпе кашни предприяти, артель коллективне паллаштарасси, кашни работникак типтерлĕ те перекетлĕ пулма вĕрентесси.

Кирек-мĕнле ĕçре те, кирек-хăçан та типтерлĕ те перекетлĕ пулассишĕн ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне анлăн туса пымалла. Перекетлĕх çĕршыва пысăк усă кӳни, тăшмана çĕнтерме пулăшни çинчен кашни рабочипе работницăна ăнлантарса памалла. Пирĕн совет çынни кашни грамм метала, кашни тумлам çунтармалли япалана, кашни пус укçана перекетлĕ тыткалама кирлине, перекетлĕх пĕчĕк япаласенчен пуçланнине асра тыттăр. Массăллă ăнлантару ĕçĕнче предприятисенчи примерсемпе, кĕнеке-журналсемпе, стена хаçачĕсемпе, боевой листоксемпе анлăн усă курмалла. Халăх пурлăхне типтерлĕ тыткалакансене мухтаса хавхалантарса пымалла, юханчăк, сапаланчăк çынсене питлесе, вĕрентсе пымалла, государство пурлăхне çаратакансене хирĕç вара пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ электроэнергие топливăна нумайрах перекетлекен предприятисем валли куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав турĕç тата çав ялава илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнчĕç. Республикăри малта пыракан предприятисем çав ялава илессишĕн кĕрешеççĕ. Çак кĕрешӳ халĕ, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăрту кунĕсенче, татах та вăйланмалла. Пирĕн фабрикăсемпе заводсен, ăмăртăва хутшăнса, перекетлĕх енĕпе илнĕ обязательствăсене срокра тата пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле. Ăмăрту предприятисен коллективĕсене топливăна, электроэнергие, чĕртавара тата ытти япаласене те ытларх перекетлеме пулăштăр.

Квартал планне срокчен тултарма пулаççĕ

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Вăрманта ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Молотовецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă май, вĕсем вăрман хатĕрлевĕн пĕрремĕш кварталти планне мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕç. Çакăнпа пĕрлех рабочисем хăйсен ĕç нормисене кашни кунах иртттерсе тултарма пулчĕç.

Малтанхи результатсем çакна кăтартаççĕ: чылай участоксемпе бригадăсем илнĕ обязательствăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Кабанова участокĕнче (начальникĕ Шапкин юлташ) январĕн çурри уйăхĕнче вуншар рабочи хăйсен нормисене 150 процент таран тултарса пыма пуçларĕç. Вăрман касакансем И. Работкин, Е. Погорелов, П. Пронин юлташсем ăмăртăва хутшăннă хыççăн куллен икшер норма тултарса ĕçлеме пуçларĕç.

Магарино ялсоветĕнчи «Полярная Звезда» колхозран пынă бригада та лайăх пример кăтартать. Бригадăра пĕтĕмпе 4 çын. Вĕсен кашниннех куллен 3,75 кубометр вутă касса хатĕрлемелле. Юлашки вунă кунра вĕсем куллен 4—4,5 кубометр хатĕрлерĕç. Бригада членĕсенчен уйрăманах Т. Минин, И. Федоров юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Турханти „Комбинат" колхоз членĕ Яков Федиков та ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕ. Вăл кашни кун 2,5 кубометр вутă турттарас вырăнне 4 кубометр турттарать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем татăклăн атакăланă хыççăн Касторное хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем Курганная ятлă район центрĕпе чугунçул узелне, Ново-Покровская ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, Гулькевкин ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, Калниболоцская, Ильинская ятлă район центрĕсене, Петропавловская, Михайловская ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата Отрада-Кубанская ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 8.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Январĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, пĕр поездне тата 4 паровоза çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем гитлеровецсен пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă группиcене пĕтерсе пынă. Пĕр участокра тăшманăн пĕр батальон пехотине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Сталинградран çурçĕртерехре тыткăна лекнĕ 3 нимĕçе хăйсен чаçне каялла янă пулнă, çав нимĕçсем часах хăйсемпе пĕрле тата 70 салтакпа офицера, парăнма шут тытнăскерсене, илсе килнĕ. Пирĕн подразделенисем 97 пулемет, 100 автомашина ытла, 12 паровоз тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем малалла тапăнса пынă, вĕсен пĕр пайĕ тăшманăн танкĕсемпе пехотин контратакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсем халăх пурăнакан пунктсене оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ узелĕсем туса хунă та совет войскисене малалла кайма чарма хăтланаççĕ. Пирĕн чаçсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, нимĕçсен йышлă укрепленийĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, вĕсене чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстереççĕ.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Артиллерин Н-ски подразделенийĕ, пехотнăй чаçсене пулăшса пырса, тăшман артиллерийĕн 32 батарейине пусарса лартнă тата 6 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ, 2 оруди, бронемашина, 17 пулемет, горючи складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 46 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски танковăй часть тăшманăн çавăрса илнĕ войскисен группи хирĕç тăнине çапса хуçнă. Тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 730 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн стрелковăй чаçсем малалла кайса темиçе пункта тасатнă. Нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 6 оруди, 7 бронетранспортер, ултă кĕпçеллĕ 2 миномет тата япаласемпе апат-çимĕç склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пысăк пункта тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем кун каçа тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. 9 танкне тата 17 автомашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Артиллерипе минометсенчен персе, тăшманăн моторизованнăй батальонне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Гвардеец-кавалеристсем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та шоссе çулĕпе чакса пыракан нимĕç пехотине сасартăк атакăланă. 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Хрущев ячĕпе тăракан отрячĕ пĕр пысăк чугунçул станцине сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем станци хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те станцире тăнă паровозпа дрезинăна çĕмĕрнĕ. Партизансен «За родину» ятлă отрячĕ тепĕр чугунçул станцине тапăнса станци хуçалăхне аркатса тăкнă тата винтовкăсем, патронсем, гранатăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Вторая Бугаевка ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсем ялти çынсене мăшкăллатчĕç. Вĕсем пире çулсене юсас тата тасатас ĕçре пуçа çĕклемесĕр ĕçлеттеретчĕç. Çу вĕçĕнче ял патĕнче нимĕç офицерĕн виллине тупнă. Гитлерла бандитсем куç тĕлне пулнă 20 мирлĕ çынна тытнă та кĕлете хупса хунă. Тытса хупнисене нумайччен асаплантарнă. Палачсем 16 çынна персе вĕлернĕ, ытти 4 колхознике вара пĕтĕм халăх умĕнче çакса вĕлерчĕç. Каялла чакнă чухне нимĕçсем 35 çурта, ялсовет çуртне, 2 шкула, вуламалли çурта, колхозăн лаша картишне тата ытти хуралтăсене те çунтарса ячĕç. Фашистла ирсĕрсем хĕрарăмсемпе ачасем кĕрсе ларнă нӳхрепсемпе пăлтăрсене гранатăсем ывăтнă». Акта Гахова, Бугаева тата ытти колхозницăсем те алă пуснă.

Январĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух сĕрле Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Волхов тата Ленинград фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă группиcене пĕтерсе пынă. Нимĕçсем пĕчченшерĕн тата ушкăнăн-ушкăнăн пăшалĕсене пăрахаççĕ те тыткăна парăнаççĕ. Н-ски часть 240 çынна тыткăна илнĕ. Гвардейски подразделенисем тăшманăн темиçе укрепленине йышăннă, 190 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Трофейăсен хисепĕ тăтăшах ӳссе пырать.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, темиçе участокра противникăн контратакисене сирсе тăнă. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшман пехотин контратакине сирсе янă та нимĕçсен тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. 6 пулемет, 4 миномет, боеприпассен складне тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Н-ски часть халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ. Тăшман пехотин икĕ ротине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен пысăк стрядне аркатса тăкнă. Пĕр танк, 2 оруди, 13 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Н-ски соединени икĕ кун хушши çапăçса, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан 33 пункта ирĕке кăларнă, вăл 20 километр малалла кайнă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе пырса, танкистсемпе гвардеец-кавалеристсем 3.000 гитлеровеца яхăн вĕлернĕ. Тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне çити, çав шутра 3 генерала, тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски стрелковăй чаçăн подразделенийĕсем урамри çапăçусенче 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçакан группăсем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен пысăк автоколоннин каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе лартнă. Халь тăшманăн çав автоколоннине пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Н-ски чаçăн разведка тăвакан отрячĕ çĕрле халăх пурăнакан пункта, нимĕçсем йышăннăскере, кĕрсе кайнă та кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн çав пункта тытса илнĕ. 3 танк, 12 автомашина, 4 противотанковăй оруди, боеприпассен складне тата тумтирсен складне тытса илнĕ.

* * *

Литва ССР-ĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пунктра вырнаçнă нимĕç гарнизонне тапăннă. Совет патриочĕсем полици участокне аркатса тăкнă тата нимĕçсен 3 складне çунтарса янă. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ тăшманăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, çар техники тиенĕ платформа тата салтаксем ларса пыракан темиçе вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 25-мĕш моторизованнăй дивизийĕнчи 35-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Юлиус Ванечек çапла каласа панă: «Унича—Брянск чугунçулĕ çинче юлашки вăхăтра крушенисем питĕ нумай пулчĕç. Эпĕ çакна пĕлетĕп: декабрь уйăхĕнче çав районри партизансем войскăсем ларса пыракан 15 поезда ӳпĕнтерсе янă». Нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 511-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Курт Магдебург çапла каласа панă: «Госпитальсенчен тавăрăнакан салтаксем чугунçулсем çинче диверсиллĕ ĕçсемпе крушенисем нумай пулни çинчен каласа параççĕ. Партизансем эшелонсене çĕрле çеç мар, кăнтăрла та переççĕ. Нимĕç салтакĕсем вырăс партизанĕсенчен хăранине пытарма çук ĕнтĕ».

Йĕлтĕрлĕ кросс умĕн

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче, шкулсенче Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кроса комсомол организацийĕсем тимлĕн хатĕрленеççĕ. Комсомолăн Н-ски заводри пуçламĕш организацийĕнчи (секретарĕ Банина юлташ) комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 5 хутчен тренировкăллă занятисем туса иртттернĕ. Йĕлтĕр çине тăма пултаракан çамрăксем кашниех йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли 20 сехетлĕ программăна вĕренсе тухнă.

Йĕлтĕрлĕ кроса комсомолан хулари ытти организацийĕсенчи çамрăксем те начар мар хатĕрленеççĕ. 1-мĕш, 4-мĕш тата 7-мĕш номерлĕ шкулсенче вĕренекенсем йĕлтĕрлĕ кроса хутшăнма кĕçех пурте хатĕрленсе çитеççĕ. Вĕсен кашнийĕнех йĕлтĕрсем пур. Унта 4—5-шер хутчен коллективлă тренировкăсем туса иртттернĕ.

Февралĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче кроса хутшăнакансен массăллă ăмăртăвĕ пулса иртет. ВЛКСМ хула комитечĕ йĕлтĕрлĕ кроса иртттерес тĕлĕшпе тунă оргкомитетăн планĕ тăрăх, çав ăмăртăва комсомолăн хулари пур организацийĕсем те хутшăнаççĕ.

* * *

Вăрçă кунĕсенче çĕршыв пирĕнтен йĕлтĕрçĕсем нумай ыйтать. Анчах çак ыйтăва комсомолăн Шупашкарти технокацки тата табак фабрикисенчи организцийĕсем ăнланса илеймен-ха. Çак предприятисенче йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленес тĕлĕшпе паянхи куна çитиччен нимĕн те туман. Вĕсенче йĕлтĕрпе çӳреме тивĕçли миçе çамрăк пуррине те шута илмен. Нихăш организацире те йĕлтĕрсем çук.

Кросс пуçланиччен юлнă вăхăтпа кирлĕ пек усă курмалла. Комсомол организаци секретарĕсен Канецкая, Михайлова юлташсен кроса хатĕрленес ĕçе конкретно ертсе пымалла.

М. Ильин.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли — уяв парнисем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ çапăçура уйрăмах палăрнă фронтсенчи войскăсене панă приказ çинчен ĕççыннисене ăнлантарса панă хыççăн районри колхозсенче хамăрăн мухтавлă боецсем валли Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа парнесем ярса парас ĕç пуçланчĕ. «Комбайн» колхоз членĕсем фронтри юлташсене 5 килограмм пыл, пĕр килограмм çу, Яманак ялсоветĕнчи «Красный богатырь» колхоз 70 килограмм тулă çăнăхĕ, Упири «Янмурзино» колхоз 80 килограмм ашкакай, 300 килограмм купăста, 5 килограмм çу тата «Красное Сормово» колхоз 3 килограмм çу, 100 килограмм махорка ярса параççĕ.

Ив. Хатаевский.

Вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ памалла

Пĕрремĕш квартал — вăрман хатĕрлевĕн хĕрӳллĕ тапхăрĕ. Январь, февраль тата март уйăхĕсенче çур çулти вăрман хатĕрлев планĕн ытларах пайне тултармалла. Хĕл вăл вăрман касма тата турттарма чи лайăх вăхăт пулса тăрать.

Анчах Чăваш АССР вăрман промышленность предприятийĕсем хĕл вăхăчĕпе май пур таран усă курса ĕçлемеççĕ-ха. Январь иртсе пырать, пирĕн вăрман хатĕрлекен предприятисем чугунçул транспортне 1943 çулăн малтанхи çур çулĕнче вутă тăратмалли плана хатĕрлес енĕпе 13,7 процент, турттарас енĕпе 12,1 процент çеç тултарнă. Чылай леспромхозсемпе вăрман завочĕсенче иртнĕ çулхи хăшпĕр çитĕнӳсемпе лăпланса ларма пăхни, ĕçе сӳрĕклетсе яни палăрать. Иртнĕ çул малта пынă Йĕпреç леспромхозĕ те январь уйăхĕнче вăтам хăвăртлăхпа кăна ĕçлет. Кунта тата турттарас ĕç касас ĕçрен юлса пыни сисĕнет. Вăрман ĕçĕсен графикĕ уйрăмах Кирери вăрман заводĕнче пурнăçа пĕр пек кĕрсе пымасть. Завод çур çулти плана январĕн 26-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 8,5 процент, турттарас енĕпе 3,8 процент çеç тултарнă. Улатăр, Шăмăршă леспромхозĕсем, Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ те çавăн пекех сӳрĕк ĕçлеççĕ.

Вăрман хатĕрлекен предприятисемпе парторганизацисен задачи халĕ рабочисемпе работницăсем хушшинчи социализмлă ăмăртупа стахановла движение анлăн сарса ярасси, çапла майпа вĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстересси пулать. Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, вăрман ĕçĕнче малта пыракан работниксем халичченхи пулман пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Улатăр леспромхозĕнчи паллă стахановец С. Федоров юлташ, 1942 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче ĕç нормине кашни кун 200 процент тултарса пынăскер, халĕ 600 процент таран тултарать.

Федоров юлташ пек пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен стахановецсем кашни леспромхозрах, кашни вăрман заводĕнчех пур. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртура вĕсен йышне татах та ӳстерсе пымалла, кашни вăрман касаканпа турттаракана стахановецсем пек ĕçлеме вĕрентмелле.

Леспромхоз руководителĕсен тата вăрмана ĕçлеме пыракансене вĕсем хăйсен заданийĕсене пĕтĕмĕшпе тултарачченех çирĕплетсе хăвармалла, ĕç вăйĕ улшăнса тăнине пĕтермелле. Партипе профсоюз организацийĕсен вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатмалла, вĕсене пурăнма кирлĕ условисем туса памалла.

Нумаях пулмасть пулса иртнĕ республикăри радиопереличкăра вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕксĕр тăратакан районсене çивĕччĕн критикăларĕç. Çавăн хыççăн ĕç вăйĕ тăратасси чылай районсенче вăйланни сисĕнет, анчах республикăри пĕр районран та вăрманта планпа палăртнă чухлĕ ĕçлемеççĕ-ха. Уйрăмăнах ку енĕпе Сĕнтĕр, Советски, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсем пĕрмаях юлса пыраççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн вăрман хатĕрлевĕ енĕпе ĕçлекен Уполномоченнăйĕн приказĕ тăрăх, Сĕнтĕр райсовет исполкомĕн председательне Угольников юлташа вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ тăратманшăн ответ тыттараççĕ. Сĕнтĕр районĕн урокĕсенчен ытти районсен тивĕçлĕ вывод тумалла: район руководителĕсен вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ тăратассишĕн хăйсен ответлăхне ӳстермелле. Чугунçул транспортне топливо тăратмалли плана тултарманнине çĕршыв умĕнче айăплă ĕç туни вырăнне хурса хакламалла.

ПРОФСОЮЗСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ ЦЕНТРАЛЬНЫЙ СОВЕТĔНЧЕ

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ халăх хуçалăхĕнчи икĕ тĕрлĕ промышленноçăн заказĕсене пурнăçлакан заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС пирĕн республикăри Н-ски завода (завод директорĕн заместителĕ Бунин юлташ) пĕр промышленность енĕпе ЛАЙĂХ ĔÇЛЕНИНЕ УЙРĂМАН ПАЛĂРТНĂ, тепĕр промышленность енĕпе ИККĔМĔШ ПРЕМИ ПАМА йышăннă.

Сталин юлташăн приказне çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе ответлер!

ОКТЯБРЬСКОЕ, январĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн приказне районри колхозсемпе учрежденисенче патриотизмла пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ.

Ĕнер райцентрти ĕççыннисен 400 çынлă митингĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Алексеев юлташ ĕççыннисене Сталин юлташăн приказĕпе паллаштарчĕ.

Митингра тухса калакансем хăйсен шухăш-кăмăлĕсемпе малашнехи ĕмĕчĕсем çинчен каласа пачĕç. „Большевик" артельри çĕвĕ çĕлекен цехăн бригадирĕ Осанова юлташ артелĕн иртнĕ çулхи тата январь уйăхĕнчи çитĕнĕвĕсем çинчен пĕлтерет. Вăл артель членĕсен ячĕпе Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв тĕлне артель пĕрремĕш кварталти плана, Октябрь революци XXVI çул тултарнă тĕле çулталăкри плана тултарать, тесе шантарать. Райфо заведующийĕ М. Каяхов юлташ районри финанс работникĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине пĕрремĕш кварталти финанс планне пурнăçланипе кĕтсе илессишĕн кĕрешĕве тухни çинчен калать.

Сталин юлташăн приказне сӳтсеявнă май, колхозсенче тата предприятисемпе шкулсенче ĕçлекенсем çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ, фронта пулăшассине вăйлатма пулаççĕ. Çулпуçăн приказĕ çине ответлесе, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв парнисем пухаççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне парнесем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комиссин складне 430 килограмм какай, 71 килограмм çу, 50 килограмм пыл, 30 пăт ытла тулă çăнăхĕ, 200 литр эрех тата колхозниксенчен 127 уйрăм посылка пухăнна. Урхаш-Кушкăри „Звезда" колхоз мухтавлă воинсене 32 килограмм какай, 12 посылка, 4 килограмм çу, 6 килограмм махорка, 8 килограмм кĕрпе, 4 пăта яхăн тулă çăнăхĕ ярса параççĕ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, январĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказне ăнлантарса панă май, районри колхозсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем пухас ĕç вăйланчĕ.

Январĕн 28-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем парнесем ярса пама 392 килограмм какай, 48 килограмм çу, 31 килограмм пыл, 100 пăт ытла тулă çăнăхĕ, 531 çăмарта, эрехсемпе премĕксем илме 20.000 тенкĕ укçа пухнă. Шуршăлти Чкалов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Козин юлташ) 42 килограмм какай, 5 килограмм пыл, 40 килограмм тулă çăнăхĕ, „Волна" колхоз—31 килограмм какай, 5 килограмм пыл, 70 килограмм тулă çăнăхĕ, „Правда" колхоз—43 килограмм какай, 2 килограмм çу, 5 килограмм пыл, 8 килограмм сухан, 80 çăмарта, 4 пăта яхăн тулă çăнăхĕ тата 12 пăт çĕрулми ярса параççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем пухас ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать.

А. Вахнин,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 29-мĕшĕ. („Чăваш Коммуни" корр., телефонпа). Паян ирхине ĕç пуçланас умĕн чугунçул станцинче ĕçлекенсем митинга пухăнчĕç. Унта станци начальникĕ Селезнев юлташ рабочисене Сталин юлташ чаплă çĕнтерӳсем тунă фронтсенчи войскăсене панă приказпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ патне янă саламлă телеграммăна вуласа пачĕ.

— Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем туни тата Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ чаплă çĕнтерӳсем тунă фронтсенчи войскăсене саламласа тав туни фронтри боецсене çеç мар, пире те, тылри боецсене, çĕнĕ çĕнтерӳсем тума чĕнет. Ирсĕр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас тесе, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, пирĕн Хĕрлĕ Çара татах та активлăнрах пулăшса тăмалла,—тет Селезнев юлташ.—Эпĕ малашне кашни поезда расписани тăрăх йышăнса илсе ăсатма, техникăллă эксплоатацин правилисене тимлĕн пурнăçласа пыма пулатăп тата хам пек ĕçлеме станцин пĕтĕм коллективне чĕнетĕп.

Митингра ун хыççăн чугунçул мастерĕ Гольдяев юлташ сăмах илчĕ. Вăл хăйĕн участокĕнчи чугунçул линийĕсене лайăх пахалăхпа тытса тăма сăмах пачĕ. Старши стрелочник Н. Никулин юлташ стрелка хуçалăхне юсавлăн тытса тăма пулчĕ.

Митингри рабочисем фронта вăйлăнрах пулăшас тĕлĕшпе ырмиканми ĕçлеме пулчĕç. Танксем тума çак кунсенче 7.404 тенкĕ укçа пухрĕç. Станци начальникĕ Селезнев юлташ 1000 тенкĕ, ревизор Миропольский, составительсем Брюхановпа Бодуйдиков юлташсем, стахановец-стрелочниксем Пыринова, Подручников, Кляпкин юлташсем тата весовщица Филиппова юлташ уйăхри ĕç укçи чухлĕ пачĕ.

* * *

ИШЛЕЙ, январĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ панă приказа тата вăл пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем патне янă салама илсенех МТС-ра митинг пулса иртрĕ. Митингра 150 çын пулчĕ. Кунта, Сталин юлташăн приказĕпе саламне вуласа тухнă хыççăн, малта пыракан трактористсемпе трактористкăсем хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каларĕç.

МТС коллективĕ мĕнпур тракторсене тата вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле юсаса çитерме пулчĕ. МТС-ри курссенче вĕренекенсем вĕренӳ ĕçне лайăхлатма, дисциплинăна татах та ытларах çирĕплетме, çуракине хăйсен ĕçне лайăх вĕренсе çитнипе тухма сăмах пачĕç. Çавăн пекех трактористсемпе трактористкăсем танксен колоннисене тума çĕнĕрен 121.720 тенкĕ укçа хывма пулчĕç. Çапла вара кунта Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тума, малтан пухнипе пĕрле шутласан, пурĕ 226.720 тенкĕ укçа пухăнать.

Г. Тепеев,
МТС Политотделĕн начальникĕ.

Вагонсем юсакан завод коллективĕ бронепоездсем тума 316.000 тенкĕ хывнă

Қанашри вагонсем юсакан заводри рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем фронта вăйлăнрах пулăшса тăрас тесе мĕнпур вăя хураççĕ. Продукци туса кăларасси уйăхсерен ӳссе пырать. Завод коллективĕ 1942 çула 11 миллион тенкĕ перекетленипе вĕçлерĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе савăнса, рабочисемпе служащисем хăйсен укçи-тенкине бронепоездсем тунă çĕре параççĕ. Заводри чылай рабочисемпе служащисем çак ĕç валли 3—7 кунхи ĕç укçине тата усă курман отпускшăн тивекен укçана хываççĕ.

Командирсемпе стахановецсенчен чылайĕшĕ бронепоездсем тума хăйсен 10—11-шер кунхи ĕç укçине пачĕç. Завод начальникĕ В. Поздняков юлташ — 2.000 тенкĕ, унăн заместителĕ Кропоткин—1.700 тенкĕ пачĕç. Январĕн 20-мĕшĕ тĕлне завод коллективĕ бронепоездсем тума пĕтĕмпе 316.000 тенкĕ хыврĕ. Забиякин юлташ начальник пулса тăракан цехри рабочисемпе служащисем çак ĕç валли 92.000 тенкĕ пухрĕç.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильине тума

СОВЕТСКОЕ. Чумаккаси ялсоветне кĕрекен колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильине тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе патриотизмла пысăк туйăмпа туса пыраççĕ. Ялсоветĕнче çак ĕç валли пурĕ 15 пин тенкĕ пухнă. Ку ĕçе „Трудовик" тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсенчи çамрăксем кашниех хутшăннă. Икĕ колхозĕнче самолетсен эскадрильине тума 6.500 тенкĕ пухнă.

Самолетсен эскадрильи валли укçа пухассине çавăн пекех Якашкассинчи туллимар вăтам шкулти пионерсемпе вĕренекенсем те активлăн хутшăнчĕç, вĕсем 1.000 тенкĕ пухса банка хыврĕç. Советскинчи вăтам шкулта вĕренекенсем 20—30-шар тенкĕ пачĕç.

М. Степанова.

* * *

Çĕмĕрле хулинчи предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсен килхуçи арăмĕсем, çулпуçăн приказĕ çине ответлесе, танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе пуçарса ячĕç. Комбинатра килхуçи арăмĕ Евгения Романовна Мазуренко юлташ пуçарнипе боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума ик-виçĕ кун хушшинчех 2.000 тенкĕ ытла пухнă. Килхуçи арăмĕсем М. Малышева, Г. Шехтер, Т. Фидашенко юлташсем кашниех çĕршер тенкĕ пачĕç. М. Петрова, П. Демина юлташсем çак ĕç валли 100-шер тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хыврĕç. Самолетсем тума ача садĕнчи воспитанниксем те 340 тенкĕ пухрĕç. 5 çулхи Г. Павлова 30 тенкĕ, Р. Андреева, Миша Ханн—20-шер тенкĕ пачĕç.

Х. Лисин.
(Хамăр корр.).

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ Шупашкар хулинчи 10-мĕш номерлĕ туллимар вăтам шкулти пионерсемпе шкул ачисен пуçарăвне ырланă. ВЛКСМ райкомĕсене, шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсене çĕрулмин тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тата ăна сыхласа усрас тĕлĕшпе иртекен Пĕтĕм Союзри конкурса хутшăнасси çинчен чĕнсе каланине шкул ачисен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче, пионерсен дружинисемпе отрядсен сборĕсенче сӳтсе-явма, çапла майпа вара пĕтĕм Союзри конкурса районри тата хулари мĕнпур шкул ачисемпе пионерсене явăçтарма хушнă.

Чăваш АССР Çĕрĕç тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕсем те Шупашкар хулинчи 10-мĕш номерлĕ туллимар вăтам шкулти пионерсемпе шкул ачисен лайăх пуçарăвне ырланă.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ Чăваш АССР Çĕрĕç тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕсемпе пĕрле республикăри конкурса хутшăнса мала тухакансене пама çакăн пек премисем тунă:

1. Шкулсем, ача çурчĕсем, интернатсем, пионер дружинисем, çамрăк натуралистсен кружокĕсем, пионер çурчĕсем валли—пĕрремĕш преми 3—500-шер тенкĕ, иккĕмĕш преми 4—300-шер тенкĕ.

2. Çамрăк натуралистсен мала тухнă станцийĕ валли—пĕрремĕш премi 1—500 тенкĕ; иккĕмĕш премисем—2—300-шер тенкĕ.

3. Пионерсемпе шкул ачисем валли:
пĕрремĕш премисем 5—100-шер тенкĕ; иккĕмĕш премисем 20—30-шар тенкĕ.

Республикăри конкурсăн пĕрремĕш итогне малтанхи хут мартăн 15-мĕшĕнче, юлашки хут — июнĕн 15-мĕшĕнче тăваççĕ.

Çĕрулмин тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тĕлĕшпе конкурса хутшăнар!

Шупашкарти 10-мĕш номерлĕ туллимар вăтам шкулти пионерсемпе шкул ачисен сырăвĕ

Çĕрулмин тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри конкурса ирттересси çинчен Лысенко академикăн çырăвне сӳтсе-явнă май, эпир, Шупашкар хулинчи 10-мĕш номерлĕ шкулти пионерсемпе шкул ачисем, çав конкурса хутшăнма шутларăмăр.

Çĕрулмин тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлесе, эпир çĕрулми акмалли çĕрĕн лаптăкне анлăлатма пулăшатпăр, Тăван çĕршывпа фронт валли пиншер пăт çĕрулми ытларах туса илме çĕнĕрен майсем туса паратпăр.

Эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

Қашни пионерпа шкул ачин çĕрулми тăррине вăрлăх валли 8-шар килограмм касса хатĕрлемелле тата ăна сыхласа усрамалла;

кашнийĕннех 3-шер витре кĕл, 3-шер килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла;

вăрлăхлăх хатĕрленĕ çĕрулмин тăррипе шкулăн 400 квадратнăй метрлă участокĕ çине çĕрулми лартса хăварса, вăл çĕрулмине Тăван çĕршывăн оборона фондне хывмалла;

«Красный партизан» колхозăн овощехранилищине шефа илмелле.

Эпир Чăваш республикинчи мĕнпур вĕренекенсене, пионерсене, çамрăк натуралистсене пирĕн примера йышăнса илме—çĕрулмин тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тата ăна сыхласа усрас тĕлĕшпе иртекен Пĕтĕм Союзри конкурса хутшăнма чĕнетпĕр.

Шкулта вĕренекенсен пĕрлехи пухăвĕ хушнипе—вĕренекенсем: **Тамара Мирошина, Тамара Левальд, Надя Семенова, Лена Шулькевич, Оля Золотова, Коля Онуфриев, С. Морушкин,** учительсем: **А. Векова** тата **Е. Павлова.**

ĔÇ ХĂВĂРТЛĂХĔ ӲССЕХ ПЫРАТЬ

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Комбинатри цехсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртура кунран кун çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Комбинатри чылай цехсем ку уйăхра иртнĕ уйăхринчен лайăхрах ĕçлеççĕ.

Комсомолка Кубанихина юлташ ертсе пыракан çамрăксен фронтовой бригадине çĕнĕ йышши продукци туса кăларма хушнă. Бригада членĕсем продукцие туса кăларма хăвăрт вĕренсе çитрĕç. Вĕсем январь уйăхĕнчи задание 24 кун хушшинчех тултарчĕç. Бригада членĕсем пурте нормăна ăнăçлăн тултарса ĕçлеççĕ. Кубанихина, Битраков, Мытиков тата Черняева юлташсем январь уйăхĕнче нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçлесе пыраççĕ. Бригадăри чи çамрăк рабочи Батьков çĕнĕ ĕçе виçĕ эрне хушшинче вĕренсе çитрĕ. Халĕ вăл та нормăна ирттерсе тултарать.

Юлашки вăхăтра Никитенко юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлет. Çак цехри Гудник юлташ ертсе пыракан бригадăна васкавлă заказ панă. Ăна пурнăçлас тесе бригада членĕсем темиçе кун хушши цехран тухмасăр ĕçленĕ. Çапла ĕçлесе, вĕсем задание срокчен тултарнă. Бригада членĕсем Леллединский, Нăзаров, Носков, Липкий юлташсем кашниех нормăсене 225 процент тултараççĕ. Комбинат дирекцийĕ, вĕсен пархатарлă ĕçне хакласа, бригадăна 1000 тенкĕ парса премилерĕ.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Верховный Главнокомандующи И. Сталин юлташ пирĕн войскăсене панă приказпа хавхаланса, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕМ КАСАБЛАНКĂРА ТĔЛПУЛНИ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРИ ПИЧЕТ МĔН ÇЫРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Черчилль Рузвельтпа Çурçĕр Африкăра тĕл пулни çинчен Америкăри хаçатсем интересленсе çыраççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Касабланкăри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Рузвельтпа Черчилль хушшинче пулса иртнĕ калаçусем Тунисри вăрçă операцийĕсем нумай вăхăт хушши лăпланса тăнине пĕтереççĕ пулмалла. Рузвельт союзниксен политикăллă стратегийĕн никĕсĕ вырăнне «противниксем пĕр сăмахсăрах парăнасси çинчен» калакан формулăна илнĕ. Çав формула вăл тĕнĕл держависен руководителĕсене нимĕнле хĕрхенӳ те пулас çуккине кăтартса парать.

«П. М.» хаçатăн çар ĕçĕсене пăхса тăраканĕ çакна палăртать: Касабланкăра пулса иртнĕ тĕлпулу союзниксен планĕн никĕсĕ — вĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсем Европăна пырса кĕресси пулса тăнине кăтартса парать. 1943 çулта, — тесе çырать обозреватель, — союзниксем, Гитлера çапса аркатассине хăйсен пĕрремĕш тĕллевĕ вырăнне хурса, пур фронтсенче те наступлени туса пырĕç.

Калаçусене Сталин хутшăнма май тупайман пирки пăшăрханса çырса, «Вашингтон пост» çакна палăртать: «Çав калаçусене Сталин хăйĕн пĕлĕвĕпе тата ăсĕпе пысăк пулăшу пама пултарнă пулĕччĕ. Сталин калаçусене хутшăнайман пулин те, калаçусенче Россия гитлеровецсене малалла та хĕссе пырас ĕçре союзниксем енчен мĕнле майсемпе пулăшса тăрасси çинчен калакан ыйту тĕп вырăн йышăннă».

Çурçĕр Африкăри политикăллă проблемăсем тĕлĕшпе каласса татăлас ĕçре çав тĕлпулу мĕнле результатсем панине Америкăри хаçатсем хăйсен комментарийĕсенче пысăк вырăна хурса çыраççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат çапла шутлать: де Голльпе Жиро тĕлпулнă май тата вĕсем деклараци панă май,Çурçĕр Африкăри лару-тăру лайăхланчĕ, «анчах та ыйту уçăмлă пуласси халĕ инçе-ха, çакă вăл союзлă çĕршывсен руководителĕсемпе халăхĕсене хытах шухăшлаттарать».

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем хăйсем Уссельтий айлăмĕнче тата унтан хĕвелтухăçнерехри сăрт-туллă районсенче нумаях пулмасть çухатнă темиçе позицие çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тĕнĕл держависен аллинче юлнă аэродромсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахать.

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин патрулĕсем ĕнер Сабраты районĕнче, Триполирен 70 километр хĕвеланăçнерехре, противникпа тĕл пулнă. Январĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Кăнтăр Италири чугунçул объекчĕсене ăнăçлăн атакăланă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: январĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем противникăн Бордо гаванĕнчи подводнăй лодкăсен базине атакăланă. Ĕнер кăнтăрла Вильгельмсгафена, çурçĕр-хĕвеланăç Германин чылай объекчĕсене, Копенгагенри суднăсем тăвакан верфьсене тата Çурçĕр Францири чугунçул объекчĕсене вĕçсе пырса тапăннă.

Январĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕн самолечĕсем Дюссельдорф хули çине темиçе çĕршер тонна фугаснăй бомбăсем пăрахнă.

Пирĕн землянксем

Капитан Федор Семенов

Кăтра вĕтлĕхпе витĕннĕ ту хĕррине пирĕн артпозици вырнаçнă. Вăтам та патвар кĕлеткеллĕ капитан Федор Семенов, аллинче бинокль тытса, орудисем умĕнче васкавлăн уткаласа çӳрет. Вăл умра тăракан паянхи пысăк задачăсемпе боецсене паллаштарать. Ăнланман ыйтусем пулсан, çавăнтах тĕплĕн ăнлантарса, кăтартса парать. Семенов юлташ çивĕч командир. Ахальтен мар ăна боецсем хисеплесе «Огонь» тесе чĕнеççĕ.

Талăкĕ-талăкĕпех шартлама декабрь сивви тăрать пулин те, капитана пачах та сивĕ туйăнмасть пулас. Ăшă алсине хывса, пиçиххи хушшине чикнĕ те вăл çивĕч куçĕсемпе бинокль витĕр малалла пăхать. Инçете-инçете чăсăлса каякан нимĕç окопĕсем çийĕнче снарядсем çулăмпа ялкăшса çурăлнине вăл мăнкăмăллăн сăнать.

Умри хăрушлăха туйса, нимĕçсем çавтери кирлĕ рубежсене — ту тăррисене хăйсен аллине тытса илме юлашки вăйĕсемпе те пулин тапăçланаççĕ. Акă, пирĕн малти позицисем патнелле вĕтлĕхсен хӳттипе фашистсен танкĕсемпе бронемашинисем шума тытăнаççĕ. Капитан вĕсене часах асăрхарĕ.

— Виççĕ... пиллĕк... вуннă...

Капитан вĕсене шутласа тăрса хаклă вăхăта ахаль сая ярас темерĕ. Тăшман мĕн чухлине мар, вăл ăçтине пĕл, тенĕ Суворов. Паллах, нимĕçсем контратака тума шут тытнă. Вĕсене вăхăтра пусарса лартмалла.

Орудисем умĕнче командăна кĕтсе тăракан артиллеристсем патне капитан васкавлăн чупса пычĕ.

— Куратăр-и? — ыйтрĕ капитан, аллипе умри вĕтлĕхсем çине кăтартса. — Нимĕçсен танкĕсем килеççĕ. Вĕсем контратака тăвасшăн. А ну, юлташсем, хатĕрленĕр! Йытăсене хамăрăн кучченеçсемпе хăналăпăр.

Капитан васкавлă команда панă хыççăн, пирĕн орудисем кĕрлесе кайрĕç. Çĕр чĕтренчĕ. Çĕршер килограмлă снарядсем сывлăша хаяр сасăпа çурса кайса, фашистсен пуçĕсем çинче çурăлма тытăнчĕç. Питех те тĕл переççĕ пирĕн артиллеристсем! Ав унта хура хĕреслĕ танк хăяккăн йăванать, бронемашина тăрăнса каять, фашистсен ӳчĕсем хура тăпрапа пăтранаççĕ, вĕсен алли-урисем сывлăшалла сирпĕнеççĕ.

— Лайăхрах, лайăхрах! — команда парать капитан.

Командирăн хăюллă сассине илтнипе боецсем татах та ытларах хастарланаççĕ. Снаряд хыççăн снаряд ăсатаççĕ вĕсем фрицсем еннелле.

Питех те кичем пулас кунта, Сталинград сывăхĕнче, Гитлерăн урнă йыттисене. Пирĕн артиллеристсем хăналантарнă кучченеçсене çинипе фрицсем ниçта кайса кĕме те пĕлмеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн хурçă чышкине тӳсеймесĕр, нимĕçсем хăйсен мĕнпур пурлăхне пăрахсах чупаççĕ.

Çулăмпа ялкăшса çунакан вĕтлĕх хушшинчи арканса пĕтнĕ танксем çине капитан чылайччен пăхса тăчĕ. Умри картина ăна питех те хаваслантарчĕ пулас. Вăл орудисем еннелле çавăрăнчĕ те, аллине çӳлелле çĕклесе, савăнăçлăн кăшкăрчĕ:

— Маттур, юлташсем! Маттур!

Часах лейтенант-разведчик, сăнав пунктĕнчен каялла таврăнса, артиллеристсен паянхи ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

— Капитан юлташ! — терĕ лейтенант тӳррĕн пăхса. — Пирĕн снарядсем тĕл лекнипе вĕтлĕхре вунă танк, 12 бронемашина арканса, çунса кайнă. Çакăнпа пĕрлех çичĕ блиндажа, 3 дзота ишĕлтернĕ. Ыттисем паллă мар, тĕрĕслеççĕ...

Мĕншĕн савăнас мар-ха ĕнтĕ артиллеристсен! Вĕсем хăйсен паянхи çитĕнĕвĕсене паллă туса, ыран татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума, юратнă тăван çĕршыва хăйсен чĕрисене хӳтеленĕ пек хӳтелеме сăмах параççĕ.

Қаç сывхарса килет. Фронт вăхăтлăха лăпланать. Сайра хутран çеç пулеметсем çилĕллĕн ятлаçса илеççĕ. Артиллеристсем те пеме чарăнчĕç. Иртенпех персе ĕшеннĕскерсем, вĕсем, хăйсен орудийĕсене тасатса, окопсене каçхи апата саланчĕç.

Артпозицире лăпкă. Канма та, ывăнма та пĕлмен капитан Семенов çеç орудисем умĕнче уткаласа çӳрет. Унăн йăли çавăн пек: тупăсем пеме чарăнсан, вĕсене тĕллĕн тĕрĕслесе тухмалла. Унсăрăн вăл канма пултараймасть.

«Орудисем тĕрĕсех-и? Çитес çапăçу валли снарядсем çитеççĕ-и? Ыран боецсене мĕн пĕçерсе çитермелле?.. Аван, пурте йĕркеллех», тесе хăйне хăй çирĕплетсе каланă хыççăн тин вăл ирĕклĕн сывласа, тулли кăмăлпа апата уттарма пултарать.

Апатланнă хыççăн капитан татах çыран хĕрринчи юр тĕми çине тухса ларчĕ те, чĕлĕмне чĕртсе, çивĕч куçĕсемпе малалла, инçетре çулăмпа çунса тăракан вĕтлĕхсем çине пăхма тытăнчĕ.

Унăн умĕнче каçа хатĕрленекен вăрçă хирĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă вăрçă хирĕ. Ку енче — Хĕрлĕ Çар. Тăван çĕршывăн паттăр та хăватлă ывăлĕсем Октябрьти революцире илнĕ ырлăхсене вĕри юн тăкса, хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр хӳтелеççĕ. Тĕрĕслĕхшĕн, телейлĕ пурнăçшăн çапăçаççĕ вĕсем.

Тепĕр енче — нимĕçсен окопĕсем. Унта — Гитлерăн урса кайнă йыттисем, тĕнчери нимĕнле законсене пăхăнмасăр, айăпсăр ачасемпе хĕрарăмсене вĕлереççĕ, эпир юнпа тар юхтарса тунă пуянлăхсене çаратаççĕ. Çавăнпа та вĕсемпе калаçмалли пĕр чĕлхе кăна — вут та тимĕр! Штык, пуля, снаряд!

Артдивизионăн командирĕ капитан Федор Васильевич Семенов Çĕрпӳ районĕнчи чăваш ачи. Çамрăках мар вăл, анчах вăтă та мар— 30 çула çитнĕ, хурапа-шурра тӳссе курнă çын. Вăрçă пуçланнăранпах вăл нимĕçсемпе çапăçать. Хăйĕн телейне кура, вăл чи хĕрӳллĕ фронтсенче пулнă. Ултă уйăх хушши, кунне-çĕрне пĕлмесĕр, Крымра Севастопольшăн çапăçнă. Ростовра пулнă. Паян вара—нимĕçсене Сталинград патĕнче вутпа çунтарать.

«Артиллери — вăрçă турри», тенĕ аслă Сталин. Çакна капитан Семенов лайăх ăнланать. Çавăнпа та унăн «турри» чи хĕрӳллĕ наступлени вăхăтĕнче пирĕн пехотинецсене малалла кайма çул уçса парать, хирĕç тăма пăхакан фашистсен танкĕсемпе бронемашинисене çĕрпе танлаштарать, çĕршер фрицсене «леш тĕнчене» ăсатать. Унăн орудийĕсем кăларса янă кашни снаряд — нимĕç вăрă-хурахĕсемшĕн вилĕм.

Кĕске вăхăтрах, юлашки икĕ уйăх хушшинче, унăн дивизионĕ нимĕçсен 70 танкне, 90 бронемашинине аркатса çунтарнă. «Леш тĕнчене» ăсатнă нимĕçсем çĕршерĕн шутланаççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн командованийĕ паттăр капитанăн Федор Васильевич Семеновăн чаплă ĕçĕсене хисепе хурса, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕ.

...Пĕтĕм йĕри-тавралăха каç тĕксĕмĕ çапрĕ. Вăрçă хирĕнче сивĕ çил çеç уласа тăрать. Çав хаяр çил, пирĕн халăхăн çиллине ăнланнă пек, çĕтĕк-çурăк гитлеровецсене силлет.

Часах капитан ура çине тăчĕ те орудисем умне васкавлăн утрĕ. Тепĕр сехетрен—татăклă наступлени. Йывăр снарядсем фашистсен пуçĕсем çинче кĕрлесе çурăлма тытăнаççĕ. Ку вăл — нимĕç захватчикĕсен юлашки сехечĕ çапать.

Лейтенант П. КРАСНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Госстрах Управленине квалификациллĕ работниксем кирлĕ: экономист, техник-строитель, секретарь-машинистка тата районсенче ĕçлеме—бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 10, Чăваш АССР Госстрах Управленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1221 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п.